К 84.09(=Чув)
А 90
Ч-49874

Светлана АСАМАТ



# Пурнан пурнăçăм – Парне...

Национальная библиотека ЧР
4-049874

**Светлана АСАМАТ**

# Пурнан пурнӑҫӑм – Парне...

Шупашкар
2018

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
А 90

Светлана Асамат.
А 90 **Пурнан пурнăçăм – Парне...** Сонетсен кăшăлĕ, шахвăртуллă çаврасем. – Шупашкар, 2018. – 96 с.

«Пурнан пурнăçăм – Парне...» кĕнекере тватă йĕркерен тăракан 230: Юрату ăшĕ-тулашĕ, Юрату ытарĕ-пархатарĕ, Юрату анлăшĕ-тарăнăшĕ, Юрату хурлăхĕ-савăнăçĕ, Юрату пĕлтерĕшĕ-хакĕ тавралла кĕпĕрленнĕ шухăшăмсен шахвăртуллă çаврисем.

Тăван халăхăма сума суса калăпланă «Пĕр кайăк» сонетсен кăшăлне те çакă кĕнекенех вырнаçтартăм.

*Автор.*

И-49 874

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-5

Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Светлана Асамат, 2018

# Пӗр кайӑк...

**Сонетсен кӑшӑлӗ**

**(2014 ç.)**

## 1

Пĕррехинче пĕр аслă Вăрмана
Янратнă-янă пĕр пĕчикçĕ кайăк,
Пуçланă та пĕрре юрра яма
Чĕлхийĕ чарăнман юмахлама.

Малтан ăна итленĕ тет йăви,
Йывăç вулли, турачĕпе çулçи.
Кайран сассийĕ каçнă тет кӳрше,
Уçланкăна та тухнă тет вĕçсе.

Килĕшсе кайнă тет çав кайăкăн юрри,
Савăнтарма пуçланă вăл пурри,
Ăна тимленĕ тет Вăрман турри.

Кăмăлĕпе çавăрса илнĕ уçлăха вăл,
Хĕвел шевлин – тавраллипех çутатнă...
Пĕр кайăк хăйĕн хăватне кăтартнă.

## 2

Пĕр кайăк хăйĕн хăватне кăтартнă,
Хăвачĕ хăратман, çемçен йăпатнă.
Вăл хĕпĕртӳллĕн, çăмăллăн юрланă,
Юррисенче хăй шухăшне каланă.

Вăл тивĕçтернĕ тĕрлĕ хутлăха та,
Çак Вăрманти мĕнпур тавралăха та.
Кайăкăн – çĕнĕ çемĕ хывасси,
Кайăкăн ĕçĕ – юрă юрласси.

Тытнă ĕçе пĕлсе тăвас пулать,
Ĕç пӳлмине таса тытас пулать,
Хевте вăйне перекетлес пулать.

Вăрман пуçне пĕр шухăш пырса ухнă:
«Ăçтан вăл çавăн чухлĕ кĕвĕ пухнă,
Кунта хăш тăрăхран вăл килсе тухнă?».

## 3

Кунта хăш тăрăхран вăл килсе тухнă?
Нивушлĕ хамăр, хамăр таврашран?
Сас хĕлĕхне ăçти шывра чӳхенĕ,
Вăр-вар пулма камран, мĕнрен вĕреннĕ?

Сахал-им пулнă пирĕн таврара
Ытарлă вăйăçсем те юрăçсем –
Пысăккисем, вăтаммисем, пĕчĕккисем,
Чаплă та вăйлă, çепĕç саслисем?

Ку кайăк – урăхла сăвап-хăватлă,
Ку кайăк – урăхла юмах-халаплă,
Вăрман кашлавĕнче ун сасĕ хаклă.

Тулашалла, таçта çитийĕн илтĕнме,
Тавралăха евĕклеме, тĕрев кӳме –
Илпек ĕçне-хĕлне типтерлĕн пухнă.

## 4

Илпек ĕçне-хĕлне типтерлĕн пухнă.
Хăш хăтлă кĕтесрен вăл шăтса тухнă?
Вĕри ăсне-пуçне ăçта çутатнă?
Сăвăласа юр юрлама хăçан тапратнă?

Вăрман йăлтăртатса тăрать,
Ун хулпуççийĕ вылянать.
Ăшшăн кĕрлет: тăванлăх, танлăх,
Сăпайлăх, чыслăх, пархатарлăх...

Юман та шухăшне сарать,
Çăка та тĕлĕнсе ларать,
Пур йывăç-курăк сăмахлать...

Вăрман тавраш ĕмĕр иксĕлмен,
Анчах, иртнипеле паянлăх çилçуначĕ
Ку таранччен çак кайăка пĕлмен.

## 5

Ку таранччен ҫак кайӑка пӗлмен.
Пӗлме, тен, вӑхӑт ирӗкӗ ҫитмен.
Ҫитнӗ те, килнӗ – кирлӗрен,
Ӑна Тӑван Ҫӗршывӗ кӗтнӗрен.

Кирлӗ те – килнӗ тӑванла,
Хурӑнташла, тус-юлташла.
Вӑрман тӑнлать, Вӑрман ӑнлать,
Вӑрман тӗпчевлӗн ӑнкарать.

Тӑнлас, ӑнлас теменнисем –
Сахал та мар, нумай та мар,
Таҫта та пур вӑл, янавар.

Кайӑк – каҫӑрӑлса мӗскӗнленмен,
Чапшӑн – айванланса сехӗрленмен,
Куштансемпе хиркеленсе чӗрре кӗмен.

## 6

Куштансемпе хиркеленсе чӗрре кӗмен.
Ыт-ахальтен чӗвӗлтететмен:
Кӗвӗ ҫеммийӗ тӗр тӗрлет,
Тӗрри – кулать, юрлать, йӗрет...

Шартлаттарса илме те хӑйкалать!
Хаймак-шаймак та шӗвӗр ӑсталать,
Пурнӑҫ кӗрлевӗн селӗм юхӑмне
Вӑл парнелет тавралӑха, несӗлсене...

Ку кайӑк – ҫыпӑҫуллӑ ӗҫлӗ,
Юррийӗ – ҫитмӗл ҫичӗ тӗслӗ,
Ытарайми ӗлккен эреш-мерешлӗ.

Ун куҫӗ те ҫӑра хӗлхемлӗ,
Сӑн-пичӗ йӑлтӑрти шевлеллӗ,
Калав-хайлавӗсем паха чӗлхеллӗ.

## 7

Калав-хайлавĕсем паха чĕлхеллĕ:
Яртлаттарса утмашкăн йыхăрать,
Ташша çапса вĕçмешкĕн шахвăртать,
Сисчевлĕ, вашават пулма хушать.

Шăм-шакĕпе хуçкаланса
Юман тăрать артакланса...
Çăки куç хĕррипе сăнать –
Нивушлĕ тапранса каять?

Çăкин те вăй выляс килет,
Çан-çурăмне турткаласа
Шуçса, сиккеленсе илет...

Кашни кĕвви – сăпай сас-чĕвлĕ,
Çеçке, çырла сапаки евĕр шерепеллĕ,
Пур йывăç çулçисен кăтрашкисемлĕ...

## 8

Пур йывăç çулçисен кăтрашкисемлĕ
Сăмахĕпе кашни чуна сиплет,
Хаклă тăванăн хыттăн ытамлать,
Ăшпиллĕхĕпе ăшшăн çупăрлать.

Вăл юрату çинчен юрлать,
Вăл çухату çинчен уйлать,
Вăл шанчăка тĕрек парса
Хурлăхсене хуса ярать.

Вăрман пуçне тухатнă юрăç
Мĕн шуçăмччен те ĕнтрĕкчен –
Ĕçне тăвать ывăнмиччен...

Тен, унăн кил-керменĕ пĕлĕтре?
Кĕвĕ ярăписем те сывлăм шăрçилле,
Юрă ярăмĕсем – яка, çавра, хитре.

## 9

Юрă ярăмĕсем – яка, çавра, хитре,
Курса-илтсе капăрланать чĕре.
Шеп кăмăл-туйăма ирĕлтерет,
Ĕмĕтсене ирĕклĕхе çĕклет...

Хурлăхлă кĕвĕ йăтăнса ансан та –
Кичемлĕх пусмăрне парăнманни!
Сăлтавсăр хыпăнмасть тăсланкă кĕвĕ –
Пурне те тăрăнать усал сăнни.

Усал сĕрлевĕ чыхăнтăр тесессĕн,
Тур лашине пĕлсе уттармалла –
Хунавлăхсен ĕрчевлĕ пулмалла.

Вăл çавăнпа ялан, хăнăхнилле,
Çавăрттарать ăс-пуçĕн арманне,
Шăрантарать çăлкуç шарлакĕлле.

## 10

Шăрантарать çăлкуç шарлакĕлле
Çу кунĕнче, кĕр кунĕнче, хĕлле...
Ĕçчен, правур, япшар çуркуннелле
Ĕнентерӳллĕн пăхтарать хăй çинелле.

Вăрман шăв-шавĕ витĕр шăтарса
Чăнкăртатать шăнкравăн янраса.
Ватти-вĕтти пуçне ăрăмласа
Юрлать хăюллăн, каçăхса кайса.

Кĕввин тĕрри-йĕррийĕ шăтăклаллă,
Алтăр-курка аврийĕн кăтрашкаллă,
Ати-ани сăмахĕн шухăшлавлă.

Унпа кервенленсе, теветленсе,
Тен, çуммăн çавтăнса çӳремелле? –
Чуна кармаштарать тӳпенелле.

## 11

Чуна кармаштарать тӳпенелле!
Сăввисенче – ытарлăх, ăнтăлу,
Шырав-сăнав, кĕрнеклĕ йыхăру,
Илĕртекен тату та юрату.

Юратăвĕ телейлĕ пулмалла,
Кĕренленсе çиçет шурăмпуçла,
Хавалĕ-халĕ – йăлтăрти çунатлă,
Çуначĕ – çирĕп шанчăклă, ынатлă.

Тăван Вăрманĕнчен вĕçсе тухса,
Ăс курăмĕн шайне пуянлатса
Чылай çӳрерĕ вăл тĕнче курса.

Çӳлте – кĕтӳ пек – тапăртан тухса
Утаççĕ пĕлĕтсем кăштăртатса...
Вăрман таврашĕнче – шута илми йăва.

## ❖ 12 ❖

Вăрман таврашĕнче – шута илми йăва.
Кашни йăван йăх-рат палли – тăха.
Тăхасене пĕрле пĕтĕçтерсе
Ăрăс тăрать ăрусене пĕрлештерсе.

Вăрман шăпи Вăрманшăн шутсăр хаклă:
Шукăль çи-пуçлă, атăллă-пушмаклă
Вăрман тум-тирĕ çутă кĕмĕл хумлă,
Кĕрекисем – хуплуллă, çуллă, пыллă.

Хăна-вĕрле киле-килех тăрать,
Саркаланса çӳрет, хавхаланать,
Хуçа – симпылĕпе сĕреплĕн хăналать.

Вăрман хăйне тӳлек, таса тытать,
Чăтлăх, уçланкă, вĕтлĕх, укăлча –
Йăвисенче ӳсет патвар ача-пăча.

## 13

Йăвисенче ӳсет патвар ача-пăча.
Малашлăха – çĕмренĕн шăтарма
Вĕсен çитĕнмелле ырра туйса,
Сатурланас пулать ырра курса.

Ваттисене хисеплĕн пуç тайма,
Çитменлĕхе çĕнмешкĕн вăй хума
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе вĕренмелле,
Çамрăккисен ăса ӳстермелле.

Вăрман тавра капланнă тăвăлсен
Хура вĕчĕлĕхне пусăхлама
Харăс тăмашкăн хатĕр пулмалла.

Парка шăтатпăр та тапаçланатпăр
Пĕрне пĕри яваплăн пулăшма! –
Тăван çĕре сăваплăн чыслама.

## 14

Тăван çĕре сăваплăн чыслама,
Тăван Çĕршыв ятне çӳлте тытма,
Тăван таврашăн сумлă ĕç тума –
Килнĕ, килетпĕр хамăр Вăрмана.

Пур йывăç-курăкĕ, ӳсен-тăран
Пулминччĕ ырханкка, наян, мăран.
Хăйĕн ĕçне кашни чипер пурнăçласан
Нихçан та хăрса лармĕ çак Вăрман.

Вăрман пуянлăхĕн вăрри кал-кал
Шăтса тухса аталанса тăрсан –
Вăрман сассийĕ кайĕ ян та ян!

Вăрманăм! Пурăн, пурăн кашласа! –
Çакна калана кайăк хумханса
Пĕррехинче пĕр аслă Вăрмана.



Ч-49874
Национальная библиотека
Чувашской Республики

## 15

Пĕррехинче пĕр аслă Вăрмана
Пĕр кайăк хăйĕн хăватне кăтартнă.
Кунта хăш тăрăхран вăл килсе тухнă?
Илпек ĕçне-хĕлне типтерлĕн пухнă.

Ку таранччен çак кайăка пĕлмен –
Куштансемпе хиркеленсе чĕрре кĕмен.
Калав-хайлавĕсем – паха чĕлхеллĕ,
Пур йывăç çулçисен кăтрашкисемлĕ.

Юрă ярăмĕсем – яка, çавра, хитре,
Шăнкăртатать çăлкуç шарлакĕлле,
Чуна кармаштарать тӳпенелле.

Вăрман таврашĕнче – шута илми йăва,
Йăвисенче ӳсет патвар ача-пăча –
Тăван çĕре сăваплăн чыслама.

*5–7.05.13–17.07.14*

# Пурнан пурнăçăм – Парне...

**Шахвăртуллă çаврасем**
**(2014 ç.)**

## 1

Те Çурçĕртен, те Кăнтăртан,
Те Анăçран, те Тухăçран
Килтĕн те кĕтĕн – ăнсăртран...
Тухрăн та кайрăн – ăнсăртран...

## 2

Эп лайăхран лайăххине суйланă,
Иккен, сана эп тахçанах палланă.
Иртсе çӳренĕ, куçăнтан пăхман,
Тинкертĕм те ăнлантăм, эсĕ – ман.

## 3

Ăнсăрт-кĕмсĕрт уйрăлу хӳхлевĕ –
Хытнă-ларнă чун-чĕре чĕтревĕ.
Ай, савни, сан сăнлине шырас-и,
Тупăнас пулсан, ăна савас-и?

### 4

Кĕвĕç чунсем ăмсаннине,
Кураймансем ылханнине
Эс ан итле, эп хупрăм хăлхана,
Ман хăлхара пĕр сан сассу кăна.

### 5

Вăрттăнлăх мар ман юрату.
Эп савнине савни çинчен
Сăвă, калав, хайлав çыратăп,
Кĕвĕ хыватăп, юр юрлатăп.

### 6

Курас килнипеле – асапланни,
Курсассăн та, пушшех асапланни.
Ма килĕшет асапланма?
Кичем! – асапсăр пурăнма...

### 7

Тĕлĕкре тĕл пулни та аван,
Тĕлĕкре эс чипер калаçан.
Тĕлĕк вăхăчĕ савăк иртет,
Вăрансан, тепĕр хут илĕртет.

### 8

Хупаха та чĕнетĕн, улаха та чĕнетĕн,
Тем те пĕр ĕçтерсе-çитерсе илĕртетĕн.
Çав тери килĕшет! Мĕншĕн чун кӳлешет?
Çылăха хăвалать, çылăха хирĕçлет.

### 9

Эс ан вăтан мана кӳрентерме,
Кӳреннĕскер, эп чĕлхене çыртатăп.
Эс ан хăра мана çиллентерме,
Çилленнĕскер, эп шухăша путатăп.

## 10

Эс леш енче, эп ку енче,
Эпир пĕр юхан шыван хĕрринче.
Шывĕ юхать-юхать, иртсе каять,
Шыв çийĕпе чупса пире шăпа шырать.

## 11

Пĕр çаранти пĕр чечеке татса
Сана парас килет çумна тăрса.
Çумра тăрассисем иртсе кайни –
Пĕрне пĕри, тек, паллами пулни.

## 12

«Сана саватăп» тенисем арканчĕç,
Ваклаçнчĕç, тусанпа таптанчĕç.
Çак сăмаха çапса ватма пултаракан
Этем куçне кĕринччĕ çав тусан...

## 13

Пымарӑм та, кӳрентӗн пуль,
Савма пӑрахрӗ терӗн пуль.
Каҫар мана, эп сыхланатӑп,
Пырсан, сивӗтесрен хӑратӑп.

## 14

Йывӑҫ ҫулҫиййӗн чӗтренетӗп,
Эпӗ санах-им сӗртӗнетӗп?
Эсӗ ҫумра, эс ытлалатӑн-им,
Улталанмастӑп-и? Саватӑн-им?

## 15

Юратуран – тарса та пытанаймӑн,
Сунарҫӑ евӗр сан хыҫран пырать.
Юратуран – чӑнне те пытараймӑн,
Вӑл санӑн ӗмӗт-шухӑшна вулать.

## 16

Тĕлпулусем – ир çутисем,
Уйрăлусем – хура каçсем.
Тусăм, килсемччĕ хăвăртрах,
Хура каçсен утти ытла вăрах...

## 17

Сана ман алăк хăлăпĕ кĕтет,
Сана ман алăк урати кĕтет,
Сана кĕтет ман килĕм кĕреки,
Чĕнкĕлтетет ман кăмăл шерепи.

## 18

Уйăха – каçсене çутатма,
Хĕвеле – кунсене ăшăтма,
Пире – пĕр-пĕрне юратма
Мĕн чарма пултарайĕ?..

## 19

Ӗмӗрӗпе сана савса
Епле-ха сансӑр пурӑнатӑп? –
Сана самантлӑха асран ямасӑр,
Шӑнса хытмасӑр, типсе хӑрмасӑр...

## 20

Пӗр кӑвайтри ҫулӑма ҫил ҫулласа ячӗ,
Пӗр кӑвайтри ҫулӑма ҫумӑр ӗҫсе ячӗ.
Халӗ эпӗр санпала иксӗмӗр те тӑлӑх,
Пусӑрӑннӑ кӑмӑлсем – ҫулса тӑкнӑ улӑх.

## 21

Паян-ялан калассӑм килнине,
Сана курас килсе чун кӳтнине
Тӗлӗк пулса пырса пӑшӑлтататӑп:
«Сана ӗлӗкхиллех, сӗре саватӑп».

### 22

Йĕпкĕм хураччĕ сан кăтра пуçу –
Эпименӳллĕн ачашлаттăм.
Халь сĕт пек шурă сан сайра çӳçӳ –
Сана эп ăнсăртран курсаттăм.

### 23

Пĕлĕт те хăш та хаш сывлать,
Темшĕн куляннипе ăмăрланать.
Мĕне сана ман парнесем? –
Çумăрлă сăввăм-юррăмсем...

### 24

Пирĕн ĕмĕт картисем вĕçеççĕ,
Пирĕн çулăм хĕмĕсем çиçеççĕ.
Вĕçесси те çиçесси пĕтсен, вара,
Мĕн айкашĕ пирĕн лĕпкесем тавра?

## 25

Кун иртет сан ҫинчен шутласа,
Кунĕпе пĕр сана кĕтнĕрен.
Каҫ иртет сан ҫинчен шутласа,
Ҫĕрĕпе пĕр сана чĕннĕрен...

## 26

Эп сана юратни – эп хама юратни,
Эп хама сан валли упрани.
Эс мана юратни – эс хăвна юратни,
Эс хăвна ман валли упрани.

## 27

Тутлă апатăн ҫи мана, савниҫĕм,
Тутлă эрехĕн ĕҫ мана, савниҫĕм...
Эпĕ сана ҫиетĕп те ĕҫетĕп,
Ҫавăнпала эп тухăҫлăн ĕҫлетĕп.

## 28

Хĕрлĕ-кĕрен шур çырли,
Ма йӳçĕ-ши ун тути? –
Нӳрĕк çĕрте ӳснĕрен,
Мăк айĕнче пиçнĕрен...

## 29

Паллашасси, туслашасси,
Уйрăласси, ютланасси –
Пурнăç екки тăн кăтартни:
Çупкăласа, тен, ăс пани...

## 30

Линкка-линкка авкаланса
Чуппа-чуппа тăвар-и?
Туйăмсене авра-авра
Пĕр кăшăла пухар-и?

## 31

Пĕр çăкăран çаври,
Пĕр майăран тĕшши,
Пĕр алтăран сăри –
Çурри сана, çурри мана валли.

## 32

Санпа – пылак асап,
Сансăр – йӳçек асап.
Шăпа вĕретнĕ симпыла
Черетлесе сыпап.

## 33

Килетĕн – ăшăнатăп,
Каятăн та – шăнатăп...
Эс вĕçен кайăк-им, çанталăк-им,
Ашапатман-мучи-тухатмăш-им?

## 34

Мĕнпур тавралăх, сывлăш илтнĕ
Эсĕ мана «Савниçĕм...» тенине.
Татах курасчĕ ман, татах илтесчĕ,
Эс – сывлăша, тавралăха тухатнине...

## 35

Эпир санпа хитре – сăнпа, чунпа,
Эпир санпа таса – сăнпа, чунпа.
Хитрелĕхпе тасалăх варринче
Çӳл тӳпене вĕçсе тухмашкăн – чӳрече...

## 36

Пĕрле мар-çке, уйрăм пурăнатпăр,
Пĕр-пĕрне хутран-ситрен куратпăр.
Тĕлĕнтермĕш туйăм упранать,
Мăшăр туйăм пĕр-пĕрне савать.

## 37

Саппунăма салтайнăях пулсан,
Сан ытамна чăмайнăях пулсан –
Мĕн куратăмччĕ-ши вилсех кайсан,
Мĕн куратăм-ши чĕрĕ юлайсан?

## 38

Тунсăхласа çитсен, йĕретĕп,
Асилӳре ишсе çӳретĕп.
Сан сассупа тĕтĕрлесе
Йĕпхӳ-хурлăхăма сиретĕп.

## 39

Ыйтуллă шухăшăм именчĕк:
«Еткерĕм пысăк-ши е пĕчĕк?».
Еткер – ĕç-хĕллĕ сăнӳкерчĕк,
Илпекĕпе пуян тĕрленчĕк.

## 40

Туйăм çĕкленĕ кĕмĕл ту тăрне,
Чĕнетĕп илĕртӳ кĕрекине:
«Евĕк хăналăп, ĕненсемччĕ, кил,
Пире чуччу ярăнтарасшăн – çил...».

## 41

Чĕре вăл тĕрĕсне сисет,
Хĕсет, асăрханма хистет.
Кам ултавпа туслашăнса каять? –
Ултав çавна ури айне тăвать.

## 42

Туйăм – чее, кăра пулать иккен,
Ман чунăм ун тарçи пулма килмен.
Кай, арăш-пирĕш, ан йăсла, ан чăрмала,
Ан амаклантăр сывă чун сана пула.

## 43

Сивĕ кăмака çумне тăмаççĕ,
Сивĕнсен савма сăмах памаççĕ.
Ăшăнас килсен, вут хутмалла,
Ӳркенмесĕр вут çурма хăнăхмалла.

## 44

Çулçă тухнă – акнă вăрлăх шăтнă,
Хура пĕлĕт хура сывлăм тăкнă.
Çеçке çурнă йывăç-курăк пăлханать,
Çутçанталăк вĕсене мĕн кăтартать?

## 45

Хăш чухне ăсли те йăнăшать,
Ухмаххи те хăш чухне чăнне калать.
Çав – ăсли те, ухмаххи те хамăрах,
Икĕ пит тени вăл çавăн майлăрах...

## 46

Ырă вăхăт, йывăр вăхăт,
Ăшă вăхăт, сивĕ вăхăт...
Ятсăр вăхăт çук та пуль,
Хăй çавна пĕлмест те пуль.

## 47

Санăн çурт умĕпе иртсе кайрăм,
Кантăкран та пăхмарăн, туймарăн.
Тунсăха кайса петĕм шыва:
«Пут, текех ăшăмра ан ула...»

## 48

«Санпа тӳшек çинче йăваланасчĕ,
Санпа минтер лӳчĕркесе курасчĕ,
Санпа çупăрланса паппа тăвасчĕ...» –
Тахçан-и, халь-и, тусăм? Ах!-чĕ...

## 49

Ăнман юратусем, тен, лĕпĕшсем,
Çунса каясшăн – çулăма сикеççĕ.
Ăнман юратусем, тен, тăвăлсем –
Ураççĕ, ӳлешеççĕ, çĕмĕрлеççĕ.

## 50

«Пĕтĕмпех йăлăхтарса çитерчĕ!» –
Илтĕнсе кайни хурлантарать.
Пурнăçа йăла-йĕрке тытса тăрать,
Вĕсене пăхăнасах пулать.

## 51

Тĕнче тăрать – тăват пайран,
Этем тăрать – тăват пайран.
Чĕре тăрать – тăват пайран,
Ĕмĕр тăрать – тăват пайран.

### 52

Пĕтĕмпех! – тапса тухать шалтан,
Ăçти-тaçти асамлă вучахран...
Пĕтĕмпех! – тапса тухать тула...
Тулти – шăла ватса кĕрет – шала...

### 53

Шăл-çăварти чĕлхе, ĕçле! –
Эс кирлĕ чăмлама, апатланма.
Калаçупа çыру чĕлхи, ĕçле! –
Эс кирлĕ сывлама, аталанма.

### 54

Этем – Турă чури.
Чуралăхĕ – юратури пăхăнура.
Пĕт, курайманлăх! Пĕт, тискерлĕх!
Çав аркатать сана, Этемлĕх...

## 55

Таврийĕпех – çынсем, чунсем,
Пĕри те пĕр пек мар вĕсем.
Этемлĕх – çутçанталăк пек –
Вĕтĕ, шултра, патрак, кĕрнек...

## 56

Ишсе тухать, çӳрет, анать,
Хĕвел те хăй ĕçне тăвать.
Ялан пĕр ĕç, çук урăххи –
Яваплăхран пахараххи.

## 57

Хĕвелпе Уйăх тупăшмаççĕ,
Виçмеççĕ пĕр-пĕрин вăйне.
Пĕри – куна, тепри – каça параççĕ
Этемшĕн, Çĕршĕн хаклă çутине.

## 58

Ырри те, усалли те – хире-хирӗҫ:
Йӗркесӗр намӑс, ҫыпӑҫуллӑ тивӗҫ.
Ырри те, усалли – пӗрне-пӗри:
Ырӑ-Хаяр, Усал-Хаяр пурри.

## 59

Суеҫе – пӗрисем тарӑхаҫҫӗ,
Харкашаҫҫӗ унпа, тавлашаҫҫӗ.
Теприсем – хутшӑнма пӑрахаҫҫӗ,
Пӑрӑнаҫҫӗ, ҫумран хӑвалаҫҫӗ.

## 60

Сан ӑшӑ куллунта ишетӗп,
Шыва-и, е мунча кӗретӗп...
Шыва та чӑмӑттӑм санпа,
Мунча та кӗреттӗм санпа...

## 61

Чӗлхе – касать, сӗрет, сӗкет,
Çуллать, сăхать, чикет,
Çăвать, тăкать, çапать...
Чӗлхе – пӗлсе пуçтахланать!..

## 62

Каçхи лӗпӗшсем те çутта юратаççӗ,
Пӗр çутă тавра пухăнса калаçаççӗ.
Тен, вăйă тăваççӗ, юрлаççӗ, ташлаççӗ,
Тен, пирӗн пекех, тӗл пулса уйрăлаççӗ.

## 63

Авалхи юратăвăм çурти
Чӗлтӗртеттӗр, çунтăр, сӳнтерместӗп.
Эп ăна санпа пӗрле чӗртнишӗн
Халӗ те пӗр чӗптӗм ӳкӗнместӗп.

## 64

Киленĕç патăн эс мана, юратăвăм,
Йывăр чухне те ăшă манăн кăмăл.
Эс пуррипе çак кăткăс пурнăçа
Йĕркелесе пыма кăштахçă çăмăл.

## 65

Эрĕм сыптартăн-им, пуç çаврăнать,
Икĕ тута, тен, кĕл тăвать? –
Пĕрне-пĕри пылаккăн сĕртĕнет,
Пĕрне-пĕриййĕ йăпану сĕнет...

## 66

Эсĕ мана сутма пултараймастăн,
Сутас пулсан – хăвна сутни пулать.
Урăххипе улăштарма хăю тупсассăн? –
Тĕнче вара, йĕре-йĕре кулса ярать.

## 67

Ан тапаçлан, шăлса пухмалăх
Пĕр çӳп те çук ман ăшăмра,
Хăть те шуса, упаленсе шыра –
Пĕр пĕрене те çук ман куçăмра.

## 68

Çур килеспе хĕл тулхăрать,
Туйипеле шаклаттарса
Шурă юрне сапса тухать...
Кăçачĕ – сĕлкĕше чăмать...

## 69

Кутăн-пуçăн, тăвалла-анаталла,
Урлă-пирлĕ, унталла та кунталла...
Пирĕн пурнăç çулĕсем вĕсем –
Утнă çул çине ӳкерĕннĕ йĕрсем.

### 70

Путишле куранать ёнерхи,
Урамра тёл пулса чаранни,
Эсё шур пушмаку пуçёпе
Манан шур пушмака таптани...

### 71

Кёрен куçла кёмёл çёрё парнелерён,
Тёсё – пёрле лартна сирень пек,
Кёмёл – пирён çалкуç сути пек...
Тав, манмастан, аставатан пек...

### 72

Асам вал – Юрату,
Чирлеттерет те сыватать, хават парать.
Асам вал – Юрату,
Пуянлатать, ыраттарса юраттарать...

### 73

Упăтелле хуçкаланса-авкаланса,
Пуç пӳрнепе тăнлав тĕлне çавăрттарса
Кулаканран кулни – сĕре аван,
Кулас килсе кулсан çăмăлланан.

### 74

Вăхăта çăварлăх параймастăп,
Урине те тăлă çыхаймастăп.
Туйăма – çăварлăх хыптарам,
Тăлă – туйăма тăхăнтарам.

### 75

Ятарласа-и е тăрук
Сан хыççăн эп чупассăм çук.
Тăвас пулсассăнах пĕр пусăм,
Чарĕ утма – сыхлавçă-чысăм.

## 76

Шурă тумпа эп уçăлма тухсаччĕ,
Тĕл пултăмăр пачах кĕтмен çĕртен.
Эсĕ те шурă тумпалаччĕ,
Эс такампаччĕ, эп – пĕччен.

## 77

Кĕтмен çĕртен курнăçăнса
Сывлăх сунса иртсе кайсан
Вăй пĕтнĕрен сак шырама –
Мĕн йĕркелет тĕлпулăва?

## 78

Куç ывăннă, шăмшак та йывăрланчĕ,
Куç хупăлчи куç хăрпăкне антарчĕ.
Ыйăх, анне пек çурăмран лăпкать,
Анне сасси сăпка юрри юрлать.

*5–6.10.14 (22.30–8.30)*

## 79

Мĕн чухлĕ, вĕçленмен сăмах купи! –
Вак-тĕвекки, лĕкки, тĕшши, çӳппи...
Чирлĕ сăмах чирне сăмах сиплет,
Сăмахăн хăватне сăмах çĕклет.

## 80

Хăнана чĕнсе йыхрав яратăп,
Килсемĕр: Новои, Саади, Ширази,
Хайам, Джами, Хафиз, Балхи,
Рудаки те Фирдуоси, Дехлеви...

## 81

Эп йĕрлесе хăварнине
Кам вуласа ларĕ-ши?
Ман куркаран сыпнă пыла
Ăсне-пуçне ярĕ-ши?

## 82

Йывăрри те çămălли – кутамккара,
Тем те пулнă мар-и пурнăçра?
Тăкăнса юлни, паллах – суйланчăк,
Ала витĕр тухнă танлаштарчăк...

## 83

Ай, сассăйăм-саркайăкăм
Тăван яла вĕçсемччĕ,
Тăван тавра сывлăшĕнче
Чăпăл туса килсемччĕ.

## 84

Вĕçтерсе яраттăн шăпчăксем,
Чĕкеçсем те тăрисем,
Ăшă çумăрсем, çилсем, юрсем –
Çепĕç кĕвĕ евĕр çырусем...

## 85

Эс ман хавасӑм, ман хавхалану,
Эс ман тӗрекӗм, ман аталану.
Эс ман сухаҫӑ, ман ана хуҫи,
Эс – чун-чӗремӗн ҫӑрипе уҫҫи.

## 86

Ҫӑлкуҫ тапатчӗ, халӗ те тапать,
Вӑл тепӗр ҫӗр ҫултан та шӑнкӑртаттӑр.
Вӑрман шавлатчӗ, халӗ те шавлать,
Вӑл тепӗр ҫӗр ҫултан та шӑпӑртаттӑр.

## 87

Миҫе чечек ҫыххи эс парнеленӗ?
Ялан... Нумай... Эп шутламан...
Кашни-кашни сӗртӗнӗвӳ – ҫеҫке,
Пӑшӑлтатса йӑпатнисем – ҫеҫке.

## 88

Юрату куçӗнче – куççуль,
Юрату куçӗнче – асап.
Эпӗ çав куççульпе асапа
Икӗ куç витрипе – ăсап.

## 89

Сывлăшпа сывлăх – пӗртăван,
Сывлăх пулсассăн – лăх! пурнан.
Сывлăш пӗтсессӗн – лăш! пулан,
Пурăннă чух пурнас аван.

## 90

Хăш та хаш сывлаттарать тесе
Чӗрӳне те ӳпкӳне ан ӳпкеле.
Çиттӗр сывлăшу хашлаттарма та,
Çиттӗр вăл пылаккăн ахлатма та...

## 91

Тинĕсре те карап, Атăлта та карап,
Тӳпере те карап авăсать.
Тен, тĕнче те карап, Çĕр çаври те карап,
Этем чунĕ те атом-карап...

## 92

Йăнăшсем тăвасси, каçару ыйтасси,
Ятласа тем те пĕр каласа тăкасси...
Пĕр-пĕрне упрама, пулăшма йывăр-им,
Хиркешсе, харкашса пурăнма çăмăл-им?

## 93

Ыр тăвасах тесен, тăвас пулать,
Тумасăр хăварсан, ăшчик çунать.
Ырă туни вăл ырăпах килет,
Ырă-Хаяр хăват çумра çӳрет.

## 94

Çăлкуç типсессĕн – ун кӳлли типет,
Куççуль типсен те – куç ĕçлет.
Тăпра шаках! хытса кайсан
Асать çавраçилпе тусан.

## 95

Çăкăр – хырăма апатлама,
Çăкăрсăр нимле апат та тутлă мар.
Юрату – чуна апатлама,
Юратусăр пурăнма кичем, начар.

## 96

Кам эсĕ маншăн, кам эпĕ саншăн,
Телейсĕр-и эпир пĕрле пулманшăн?
Чăн-чăн телей вăл – тĕл пулни,
Пĕрне пĕри çак таранччен килĕштерни.

## 97

Тарланă кантăксем çине,
Пас тытнă кантăксем çине,
Хăйăр çине те юр çине –
Çыратпăр чун савни ятне...

## 98

Питĕ селĕм, лайăх хăналать,
Çисе янă, вăл татах хурать.
Тăранса çитсен: «Ну, çи-ха, çи...» тени,
Хыльчăк евĕрех, пыра ларни.

## 99

Чĕрни вĕçне тăнă калча
Ӳсес теет, кармашать.
Çавна курнă кăвак пĕлĕт
Йăрансене шăварать.

### 100

Акатуйра – купăс, сăрнай,
Шăхлич сасси янăрать...
Симĕс улăх, çаран, вăрман
Курăкĕсем таптанать...

### 101

Тăнран тухас пулсан,
Тăна кĕме ăс пулăшать.
Инкек çапса хуçас пулсан,
Синкек тепре нăчлаттарать.

### 102

Вăтаннипе пăлханни,
Савăннипе хумханни –
Туйăм, кăмăл çăпалипе
Ăш хуранне пăтратни.

## 103

Йăмра çеçки сарă çеçке,
Çулçи евĕр çинçешке.
Улма-çырла, çĕмĕрт çеçки –
Тăпăл-тăпăл хитрешке.

## 104

Утса та мар, чупса та мар,
Çулсем иртеççĕ васкавар.
Вăрăм та мар, кĕске те мар
Ĕмĕр тăршшин хуçи – çын мар.

## 105

Куççуль пĕрчисене пĕрер-пĕрерĕн
Шухăш çиппи çине тирес пулсан,
Пĕрре-пĕрре туртса татса ярсан? –
Çав йӳçĕ кӳлĕре хăвах путан...

### 106

Эсĕ сĕврĕклентĕн,
Эпĕ тĕлкĕшетĕп.
Сӳнме пĕлмен туйăмшăн
Шутсăр хĕпĕртетĕп.

### 107

Хурлăх çăта-çăта чĕре хавшать,
Савăнăçне сыпать те – сывалать.
Эмел вĕсем – асамлă шĕвексем:
Йӳçсе тутланнă сăрасем те симпылсем.

### 108

Эп макăрмăттăм эс çумра пулсан,
Эс мĕншĕн хăвăртрах килместĕн?
Мана чăнах саватăнах пулсан,
Эпĕ йынăшнине мĕн-ма илтместĕн?

*6.10.14 (10.45–16.45)*

## 109

Эпир паллашнă тăрăхри
Тавра чăнах та юм юмлать.
Унти çаран, уй-хир, вăрман,
Çăлкуç – кĕсле, сăрнай калать.

## 110

Пăнтăр-пăнтăр балалайка
Пăнтăрккипе ташлатпăр.
Урасемпе параппан пек
Тăппи-таппи тапатпăр.

## 111

«Сансăр пурнăç çук» тени суя,
Тен, суя та мар, чăнни – сайра.
Юрату вăл кукăль мар – касса çиме,
Урхамах та мар, йĕвенлеме.

## 112

Çипне тĕвĕлемесĕр тĕр тĕрленĕ
Улахсенче чăваш хĕрпĕрчисем.
Вĕсем юрланă юрăсен эрешĕ –
Алшăллисем çинчи мерешĕсем.

## 113

Пĕррехинче, савнă туспа
Чиркӳре тĕл пулнăччĕ.
Иксĕмĕршĕн, Мускав çулĕ
Ик еннелле выртнăччĕ.

## 114

Асаилӳ çил арманĕн
Çаврăнать те çаврăнать.
Савни енчен вĕрнĕ çилсем
Ачашланăн туйăнать.

### 115

Атте-анне, Чапак тавраш ятне тытса,
Сапăр калам – каламалли сăмахăма.
Тăван халăхăмпа пĕрле утса,
Капăр ĕçпе пуянлатам кун-çулăма.

### 116

Калассăм килнине калаттарма,
Юрлассăм килнине юрлаттарма –
Сăмахăм тимĕрç лаççинче шăранчĕ,
Сунтал çинче мăлатукпа туптанчĕ.

### 117

Эй, Турăçăм! Эс панă хаклă вăхăта
Кахалланса ларса сая ямастăп.
Эс пехилленĕ Сăвапа та Хăвата
Хисепсĕр, пархатарсăр хăвармастăп.

### 118

Савни тени – ула-чăпар Сăнар,
Савни тени – ултав, шырав-сунар.
Çукран пур тăвасси – ăсталăх,
Савни-Сăнарăм – йăпанмалăх...

### 119

Атте çуртне аслаттесем хăпартнă,
Аслаттесен килне мăнукĕсем çутатнă.
Пӳртре вучах та кăмака çунать,
Анкартинче мунча мăкăрланать.

### 120

Никĕс ярaççĕ-и ултав çине ултав тăкса?
Кермен лартаççĕ-и суя çине
суя купаласа?
Пĕри мана çав кермене кĕртесшĕн,
Тĕртсе ярса çав тамăкра ĕнтесшĕн.

### ❖121❖

Этем хăвачĕ çунатланĕ,
Пусăрăнмасть пулсан – чĕри.
Тĕллевлĕ ĕмĕт пурнăçланĕ,
Ĕçне туса пырсан – вĕри...

### ❖122❖

Кивви кивелнĕ, паянхи те кивелет,
Анчах та акă мĕн тĕлĕнтерет,
Иртсе кайни тымар ярса юлать,
Кивви таврашĕнчен çĕнни калчаланать.

### ❖123❖

Иксĕмĕр сĕре хитре ташланăччĕ
Чăвашла та, вырăсла та, темĕнле те,
Иккĕн чух та, халăх хушшинче те,
Аякра, кунта, таçти çĕрте те...

## 124

Шур перчетке ҫыхса пӳрне шӑтни –
Сана эп кунӗ-ҫӗрӗпе кӗтни.
Шур перчеткеллӗ аллӑмран сана парне,
Сан ятупа тӗрленӗ кӗнеке.

## 125

Кӑмпа ҫиес килет-и? – хатӗрленӗ,
Тӑварлани, ӑшалани те пур.
Чейне ҫырласемпе те пылпала
Ӗҫтерӗттӗм сана юрла-юрла.

## 126

Ман – асанне, атте ҫулне ҫитесчӗ,
Ҫитесчӗ те, тата мала иртесчӗ.
Вӑхӑт – сӑмахӑн, пулӑмӑн тӗревӗ,
Шанчӑк ӗненӗвӗ, ҫуначӗ, пӗвӗ...

## 127

Хамăр ана çинчи йăрансене
Хамăр вăйпа чавса уçатпăр,
Кăпăшкалатпăр, шăваратпăр,
Акса ӳстернине чăмлатпăр.

## 128

Тутлă тетĕн эп пĕçернĕ апата,
Савăт-сапийĕ тимĕртен, тăмран.
Техĕмлĕ тетĕн эп вĕретнĕ сăрана,
Алтăр-курка, катка-пичкийĕ –йывăçран.

## 129

Самай лăскарĕç хуйхă-суйхăсем,
Мĕскер тӳссе мĕскер кăна чăтмарăм.
Анчах та, çывăх тусăм тенине,
Мана шелленине пачах курмарăм.

## 130

Таçта кайсан та, пуçăмра пĕр эсĕччĕ,
Кĕтрет курсан та, куçăмра пĕр эсĕччĕ.
Эс хальхи мар, эс авалхи – асра,
Виç ĕмĕр каялхи Чăвашкасра...

## 131

Те хамăр çĕтнĕ, те сукмак çĕтерчĕ,
Пĕр утмасулăн вăрăмĕш пӳкленчĕ.
Тăнлавĕсем шуралнă шухăшсен
Пуçламăшĕпе вĕçĕ шĕвĕрленчĕ.

## 132

Шухăша кайса ларатăп,
Хут çине йĕрсем хыватăп.
Кулакан та йĕрекен
Йĕркесем кăтра, ĕлккен...

## 133

Пирĕн тавра – пирĕн çумма
Çыпăçакан тем те пур.
Усал-тĕсел тапăнасран
Кĕле хур та, хĕрес хур.

## 134

Пăтăрмахсем çине такăнасси –
Чуна та, шăмшака амантасси.
Ура хурса тĕртсе яракансем –
Юттисем мар, çумри кĕççе питсем...

## 135

Юратупа хăмсаракан та пур,
Юратăва йăлăнакан та пур.
Хăмсаракан хăратнинче – тискерлĕх,
Йăлăнакан нăйланинче – имшерлĕх.

### 136

Лӗклентерсе ҫитернӗ ултава
Сурса пӑрах, ҫитет, ан муритлетӗр!
Ҫуммӑн утса такӑнтарса пыракана
Сирпӗтсе яр, ҫитет, ан кансӗрлетӗр!

### 137

Кӑшарни ҫӑварне – кукӑль-макӑль, хуплу,
Ҫӑварни ҫӑварне – икерчпе хӑпарту.
Акатуй ҫӑварне – юрӑсем, ташӑсем,
Ҫак йӑла-йӗркене пӑсас мар, тӑвансем.

### 138

Тухья та тӑхӑннӑ, хушпу та,
Халь ҫыхрӑм тӗреллӗ сурпан.
Апла пулсан та, ырӑ ватлӑх,
Ман паталлла ан хыпалан.

## 139

Юрату шăкăлтататать – ку ăшă çумăр,
Юрату пăшăлтататать – ку ăшă юр.
Шăнтса хăртаканни – Юрату мар.
Ултав, суя, элек эшкерĕ – шар...

## 140

Тăвĕ чăнкă, пурпĕрех хăпармалла,
Альпинистăн питĕ тимлĕ пулмалла.
Хăпарса тăрсассăн – анмалла,
Пушшех асăрхануллă пулмалла.

## 141

Хаклинчен хаклăраххи вăл – пурнăç.
Ырăран ырăраххи вăл – тăнăç.
Тăнăç пурнăç килĕшӳллĕ пулнăран,
Ĕмĕрсем иртсе пырать аван.

## 142

Туртăм туртнипеле айванланса,
Туйăм йăлăннипе тăнсăрланса
Хамăр йăвасене ватнă пулсан,
Пирĕн пĕр ят пулатчĕ – ик тăн-тан...

## 143

Çамрăкла паллашнăях пулсан,
Çамрăкла туслашнăях пулсан...
Тыткăнларĕ каярах – тĕл пуласси,
Куç хывса куçа йĕпетесси...

## 144

Вăлта çипне асăрхаман пулла
Ăшалама çатма çине хураççĕ.
Сунарçăсем, шуралнă уй-хире
Тимсĕрсене персе тытма тухаççĕ.

### 145

Çеçкесем – килĕштерӳ юмахĕсем,
Çимĕçсем – килĕштерӳ халапĕсем.
Эпир лартса ӳстернĕ йывăççен
Турачĕсем çинче – куйкăрăшсем*.

### 146

Уй-хир урлă, кĕмĕл кĕпер урлă
Эс килсе çӳреттĕн ман пата.
Уй-хир урлă, кĕмĕл кĕпер урлă
Çаврăнса пăхса шырап çав вăхăта.

### 147

Типнĕ чечек чипер пулнă теççĕ,
Яшлăх иртнĕ, юлнă аякра.
«Мĕншĕн-ши çапла?» – тăварлă ыйтăва
Хуравлаймĕ ни тымарĕ, ни тăпра...

---

* Куйкăрăш – телей кайăкĕ *(миф.)*.

### 148

«Ăçта çӳрет-ши ман савни?» –
Хурлантарать пике юрри.
Э-эй, сан савни – нумайăшĕн савни,
Ун час-часах, çине-çинех – çĕнни...

### 149

Тĕтĕм, мăрьерен тухса
Вĕçсе каять уçлăхалла.
Вăл пĕлĕтсем патне кармашăнать,
Пĕлĕт пулса курма тăрмашăнать.

### 150

Кĕвĕçсе тиркени – шăртлă, йĕплĕ:
Чакалать, амантать, вăрçтарать.
Ăнланса хаклани – чăн сĕреплĕ:
Çĕнтерӳллĕн утма вăй парать.

## 151

Кам пылпа çу сĕрсе йĕпĕлтетет,
Шăлне ерсе, куçне хĕссе ихĕлтетет –
Çавсем нумайăшĕ курнăçланаççĕ,
Хыçран пеме хĕвре пăшал тытаççĕ.

## 152

Пăлахая перее пурăнакан
Нихçан та сумлисен ретне тăман.
Сумлисене ăмсаннипе ялан –
Çăварĕнче кăранклатать çăхан...

## 153

Çава сасси – кăшшин-кăшшин! –
Çава айне ан пулччăрин
Улăх-çаран кайăкĕсем,
Кĕввик-кĕввик юрлакансем.

## 154

Килтен хăваласа кăларнă кушаксем,
Килтен тапса сиктернĕ йытăсем
Çӳреççĕ урампа сĕнкĕлтетсе,
Куçран пăхаççĕ, тем калассăн тĕшмĕртсе.

## 155

Пуяна тивĕçтерет – хакли,
Чухăна çырлахтарать – йӳнни.
Пурнăç мĕн ĕмĕртен – суту-илӳ,
Пурнăç мĕн ĕмĕртен – хирĕçтăру...

## 156

Пыльчăк ашма кам юратать?
Утас пулать, ашас пулать.
Пыльчăк типет, çул якалать,
Çанталăк та тирпей тăвать.

### 157

Килти выльăх килех килет тет,
Алри кайăк алах анать тет.
Алла илме кирлĕ – тараватъ,
Хăнăхтарма кирлĕ – вашават.

### 158

Каç та иртет сисмесĕр, ĕç ăнсан,
Кун та иртет сисмесĕр, ĕç ăнсан.
Ĕçе – пуçа тайса тăватпăр,
Ĕçре – шыранине тупатпăр.

### 159

Кашни тымарăн хăйĕн йывăç-курăкĕ,
Кашни этем – хăйĕн йăх-рачĕн пурлăхĕ.
Несĕл еткерлĕхĕ çăра, парка туратлă,
Юн пĕрчисем ним çĕнейми хăватлă.

### 160

Саватăп эп сана, тăван таврашăм,
Кайри Ăнтавăшри ял-йышăм,
хурăнташăм,
Саватăп эп сана, тăван чĕлхемçĕм,
Мана Çын тăвакан шăпам-хĕресĕм.

### 161

Эп савакан арçын... Вăл мансăр та
телейлĕ,
Ун пурнăçĕ урăххипе хĕвеллĕ.
Эп савакан арçын... Те чăн, те ĕмĕт,
Туйăм тени те – те тĕтре, те тĕлĕк...

### 162

Нумай юрларăм Юрату çинчен –
Пулнă-пулман лару-тăру çинчен,
Туйнă-туйман сĕртĕнӳсем çинчен,
Илтнĕ-илтмен юмахлани çинчен...

## 163

Ют йӑвара ӳсет куккук чӗппи,
Таҫта хӳхлет ун амӑшӗн сасси,
Куккук чӗп кӑларма пултараймасть,
Тунӑ ҫӑмартине ӑшӑтаймасть.

## 164

Тӗл пулма ҫӑл патне чуптараттӑм,
Эс кӗтеттӗн, эс хирӗҫ утаттӑн,
Пулӑшаттӑн мана шыв ӑсма,
Ҫырмаран тӑвалла улӑхма...

## 165

Алтупанне кӑвайт хӗртетчӗ –
Тахҫантанпах кӑвайт чӗртмен.
Куҫ умӗнчи савни хитреччӗ –
Кайнӑскере тепре кӗртмен...

*8.10.14 (11.30–21.30)*

## 166

Сĕм вăрманти улмуççийĕн
Тути ытла кăвасак,
Ун тутине тутлантарма
Мĕн паман ăна пылак?

## 167

Хăваламан, тĕртмен, чĕнместĕп,
Килес пулсан та тĕпчеместĕп
Ăçта, кампа çӳренине,
Мĕн сăлтавпа таврăннине.

## 168

Вăранма – куçа уçатпăр,
Çывăрма – куçа хупатпăр.
Уçăлнă куç хупăнасси – саккун,
Çав саккуна пурнăçлаканĕ – чун.

## 169

«Эпĕ сана юрататăп» тесе
Сывлăша ăшăтатăп,
Таврари сывлăша пус таятăп,
Эпĕ çак сывлăшра пурăнатăп.

## 170

Ачаш ачалăх, шухă çамрăклăх,
Вĕсен пуласлăхĕ – телейлĕ ватлăх.
Ёмĕтленни кăна сĕре сахал,
Телей – асăрханулла мăк сухал.

## 171

Кашни шухăш çиппин
Хăйĕн тăршшĕ хăй вăрăмăш.
Хăть патрак вăл, хăть çирĕп –
Хайĕн çинçĕшĕ, хулăмăш.

## 172

Ăслисем телейсĕр, тенĕ ватăсем.
Ухмахсем телейлĕ айвансем-и?
Ăслисен телейĕ – ăс çӳллĕшĕнче,
Ухмахсен – айванлăх çырминче...

## 173

Малтан – çеçкипе савăнатпăр,
Кайран – çимĕçне тутанатпăр.
Тутне пĕлекенĕ шăлпа тута мар –
Çăра сĕлекеллĕ, чĕлхеллĕ çăвар...

## 174

Тваткĕтеслĕх ăшĕнче –
Виçкĕтеслĕх вырнаçать.
Тваткĕтеслĕх – аçи тет,
Виçкĕтеслĕх – ами тет.

## 175

Пĕр-пĕр çынна йывăрлăхра
Никам та шеллемест пулсан,
Апла çав çын кăра, наян
Пĕр никама та ыр туман.

## 176

Кашкăрăн çыртакана та,
Çĕленле сăхакана та
Пач! курмас, илтместĕп,
Çыхланас теместĕп.

## 177

Кирлехчĕ-ши сана «Савни» тесе чĕнме,
Кирлехчĕ-ши вулакана йĕкĕлтеме?
Эп шутласа кăларнă Çын – Сăнар:
Суя кăвайт таппи – суя сăмах-кăвар...

*10.10.14*

## ❖178❖

Кĕрен те хăмăр, сарă, хĕрлĕ,
Ытти тĕссем те темĕн тĕрлĕ.
Такам алли кĕркуннене
Тумлантарать кинемилле...

## ❖179❖

Йывăç çулçи, курăк çулçи
Çӳç пек тăкăнать.
Турат çинче юлнă çулçă
Черетре тăрать...

## ❖180❖

Чейне пылаклататпăр сахăрпа,
Кăравая тутлантаратпăр тăварпа.
Лартнă улма-çырла садра ӳсет,
Лартманнисем – пăхмасăрах
пиçет...

## 181

Ларас-тăрас килмен самантсенче
Пуçран витĕнсе вырт тӳшек çине.
Никам пĕлмелле мар вăрттăнлăхна
Пăшăлтатса каласа пар хăвна.

## 182

Шухăш карти вĕçсе кайсан
Çырас тесен те çыранмасть.
Хисеп тума ĕлкĕрмесен
Кӳреннĕ шухăш тавранмасть.

## 183

Ăнланаймастăп, мĕн шутпа
Тĕлĕксене килсе çӳретĕн?
Тен, куçа-куçăн калаçма
Намăсланатăн, именетĕн...

*11.10.14 (9.00–!3.00)*

## 184

Тăвар та, сахăр та, кĕрпе те вĕтĕ,
Вĕтĕ пулсан та – сиплĕ, тутлă пĕрчĕ.
Вĕсем хăйсен капламĕсен тĕпренчĕкĕ,
Каплам пахалăхĕн тутин илпеклĕхĕ.

## 185

Эс чăнласах та савнă-ши мана? –
Чăнах пулсан, чĕре иккĕленместчĕ.
Уру та, пирĕн çул-сукмак çинчен
Айккинелле кайса çул çĕтерместчĕ.

## 186

Çак таранччен çырни-хайланисем –
Шухăш тымарĕн тарăнăшĕсем:
Кун çути вĕçтернĕ сăмахсем,
Каç çути çиçтернĕ юмахсем...

### 187

Суеçĕ – сӳпĕлти ултавçă,
Хăравçă пулнăран – çăхавçă.
Илес-милес тарçи пулса
Çӳрет çĕленĕн чашкăрса...

### 188

Килте-и, урамра-и, чиркӳре-и
Эп канашлатăп Турă-Аттепе,
Унăн Иисус Христос ывăлĕпе,
Этемлĕхĕн Таса Амăшĕпе.

### 189

Çĕр-Анне пурлăхĕпе хăналанса
Пурăнатпăр хырăма тăрантарса.
Выçăхсен кĕсьи-çăварĕсем –
Тăрана-тулма пĕлми тĕпсĕррисем.

### 190

Мĕншĕн каяс çăлкуç патне,
Лăпка-лăпка ун куççульне шăлма-и?
Мĕншĕн каяс йăмра патне,
Ӳкнĕ çулçисене туратĕнчен çакма-и?

### 191

Халăх çухаласси – чăнне калар! –
Тымарĕнчен те, кăкĕнчен те мар...
Ăратлă, чаплă, тулăх Çĕр –
Тĕнче Ăс-халĕ пĕтĕленĕ Арăм-Хĕр...

### 192

Çĕр айĕнче – тен, хаклă тикĕт,
Тен, хаклă чул, тăпра пулатпăр.
Хăйăр та, тăм та – пурте кирлĕ,
Пурнăçпа вилĕм – урлă-мирлĕ...

## 193

Тĕрлĕ ӳтлĕ-питлĕ этемсем –
Çĕр çинче тĕпленнĕ халăхсем:
Упăте пек вĕттисем те,
Улăп евĕр шултрисем те...

## 194

Чĕлхепе-и? – тимĕр те аватпăр,
Чĕлхепе-и? – савăл та çапатпăр.
Ухлатса юрлас-ташлас килни –
Пуçăннă ĕçе правуррăн вĕçлени.

## 195

Асамат кĕперĕ авăнать,
Картлашкаллă утмаçул хывать.
Çимĕкре, ун кавирне пуса-пуса
Çăтмаха – таса чунсем каяççĕ хăпарса...

## 196

Ҫӳл тӳпери Таса Килте
Пурнаҫҫӗ чыслӑ этемсем.
Тӑван Киле тавранассу килсен,
Кунта чипер пурӑнмалла, ҫынсем.

## 197

Шурӑ ҫӑнӑх, шурӑ чуста,
Ҫӑкӑрӗ – хура,
Пӗлтерӗшне пӗлес тесен,
Тупсӑмне шыра...

## 198

Шеллес те пулӑшас пулать,
Йӑнӑшасси такамӑн та пулать.
Патакласа та ятласа
Кӗртейӗн-ши ҫынна ӑса?

## 199

Юратăва кӳрентермен пулсан,
Усал вăйсен чури пулман пулсан? –
Каяс çулсем, Çĕртен – Тӳпенелле,
Чăн Юрату-Аттемĕр патнелле!

## 200

Сăвăллă шухăш кĕнеки çырма
Çитмĕл те çичĕ сывлăш хумĕ пулăшрĕ.
Çитмĕл те çичĕ вăйă картинче
Манпа пулма пин шухăш-йĕкĕт
тупăшрĕ...

## 201

Çăварлăхпа йĕвен – пĕр мăшăр,
Тапкăчăпа йĕнер – пĕр мăшăр.
Сăвап-хăват, пит-куç та – мăшăр,
Кăмăл-сипет те, ырлăх-сывлăх – мăшăр.

*12.10.14 (11.00 –15.00)*

## 202

«Кук-кук...» тесе куккукĕ авăтать,
«Кукарекку!» тесе автан çунат
çапать.
«Ку-ку» тесе пытанмалла вылятпăр,
«Ку – кам, ку – мĕн?» тесе ыйту
лартатпăр.

## 203

Авалтан никĕс хывнă кĕтес –
Тăван ялăм: йăмра та пилеш...
Çамрăксем кайса пĕтрĕç ялтан,
Тăван ял – çĕнелми ватăлан.

## 204

Асамлă çунтару вăл – Юрату,
Çунса каяссăнах çунас килет.
Вылявçă карусель вăл – Юрату,
Пуç çаврăнсан та, ярăнас килет.

## 205

Юрату – тĕнче тĕрекĕ,
Арпала ама сĕрепĕ,
Туйăмсен симпыл сĕтекĕ,
Савăшу илемĕ-шепĕ.

## 206

Асилтерни те уссăр, манса кайрăм,
Эп улăштартăм кивĕ çи-пуçа,
Ăшчикĕмрен вĕрсе-тĕртсе кăлартăм
Йӳтесе хытнă карчăк-шанчăка.

## 207

Ăшри кăмрăк шевли тĕлкĕшни –
Çунакан туйăмсем вĕлкĕшни...
Куççульпе сăн-пите хĕретни –
Туйăмсен çулăмне сивĕтни...

## 208

Çичĕ ютри çичĕ çавра
Карта карнă сан тавра.
Çичĕ ютрах юласси –
Çичют тăпри пуласси...

## 209

Чун хурланнă вăхăтра
Мĕншĕн чĕре ыратать.
Мĕншĕн тесен чĕре-тусăм
Чунăм-туса юратать.

## 210

Çумăр лӳшкет, çумăр лӳшкет,
Çутçанталăка тӳнккет.
Çумăр ĕçсе лартнă тăпра
Ӳсĕр çын пек ирĕлет.

## 211

Хăйăр пĕрчинчен ахах ӳстертĕм,
Персе ятăм, хăйăрăн саланчĕ.
Пĕр çынпа çывăхланса çӳрерĕм,
Ултавне ăнкартăм та, ютланчĕ.

## 212

Йывăр, тăвăр, сивĕ – пĕринпе.
Çăмăл, ăшă, уçă – теприпе.
Юрама пĕлекене мухтав,
Нимшĕн те çĕклемĕ вăл шăв-шав.

## 213

Çулçӳревçĕн иртсе кайрăн ман умран,
Килнине те, кайнине те курса юлтăм.
Курăнса юлни – ăрша ӳкерчĕкĕ,
Курăнса юлни – тĕтре пĕркенчĕкĕ.

*18.10.14*

### 214

Сăпса, тĕкĕлтура, пыл хурчĕ
Сăхса-çыртса хӳтĕленет.
Шăна-пăван, вăрăмтуна, ӳпре –
Этем юнне ĕçме сĕре хивре.

### 215

Ĕçре те канура типтерлĕх кирлĕ,
Тимсĕрленнин тинки пăсланнă тет.
Йĕркеллĕ пурăнмашкăн канăç кирлĕ,
Канăçлă çын шăпи хевтеллĕ тет.

### 216

Ĕмĕтсене чăмаккана пухаймăн,
Пĕр ывăçа та пуçтараймăн.
Пире йĕкĕлтеме те хĕтĕртме
Кам ăсталать-ши çавсене?

## 217

Кивĕ апат ярса паратăп,
Ĕнер пĕрле пĕçернине.
Çĕнĕ апат çиес килсессĕн,
Хур пуленке – чун вучахне.

## 218

Еплеччĕ иртнĕ çуркунне,
Епле çăраччĕ пыллă сывлăш –
Çавăнтанпа çак таранччен
Парать мана çыруллă тупăш.

## 219

Алкум умнех-çке килтĕн, урхамахăм,
Кайсан-кайсассăн ĕрĕхме тапратрăн.
Чарăн ара, çитет, анса юлатăп,
Тап та сиктер, чĕн пушăпа çапатăп.

## 220

Ĕмĕрлĕхе килнĕ туйăм
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр,
Ĕмĕр тăршшĕн анлăшĕнче
Сар хĕвелĕн курăнтăр.

## 221

Çăка йывăç ырри – ун шерпечĕ,
Çулçи тăрăх пылшыв юхтарни,
Хăй айне тумлата-тумлата
Тымарне, тăприне сăйлани...

## 222

Ытла та кăткăс пурнăç çулĕ,
Мĕн чухлĕ йăнăш тунă пулĕ.
Атте-анне ăс панине тишкермелле,
Вĕсем пире ыр суннине итлемелле.

## 223

Ман пуç лĕпки – аэродром та космодром,
Шухăшăмсем ракета пек вĕçеççĕ.
Тĕнче уçлăхĕнчи вăрттăнлăха
Кĕреççĕ те тухаççĕ, çĕнелеççĕ...

## 224

Турă, çынна Çынай çине антарнă,
Çынай-Çĕр тăрăх вырнаçтарнă.
Мучей-Моисея Çынай ту тăрринче
Вунă пӳрни çине вун çĕрĕ тăхăнтарнă.

## 225

Турă Юратăвĕ вышкайсăр пысăк,
Ун пĕтĕм тĕнчене çутатмалла.
Çынсан – Аттемĕре пулăшмалла,
Вăл панă Пурнăçа упрамалла.

### 226

Асамат кĕперĕ тăрăх
Çул çӳрет вăл – Юрату.
Тӳперен – Çĕр çинелле,
Çĕр çинчен – Тӳпенелле...

### 227

Сыпман шĕвек тутине
Ăçтан пĕлес сыпмасăр,
Асап, телей тенине
Ăçтан пĕлес, курмасăр.

### 228

Ĕмĕр тăршшĕ юратăвăм –
Тăван кил, атте-анне.
Турă панă Юратăвăм,
Пурнан Пурнăçăм – Парне.

*19.10.14*

## ТУПМАЛЛИ

Пĕр кайăк... . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Пурнан пурнăçăм – Парне... . . . . . . . 19

*Литературно-художественное издание*

**Светлана Азамат**
**(Смирнова Светлана Васильевна)**

***Пурнан пурнăçăм – Парне...***
***Данная мне жизнь – Дар...***

**Издается в авторской редакции**

**Компьютерный набор *С.В. Азамат***
**Дизайн обложки *С.В. Азамат, Э.В. Кирилловой***
**Верстка *Э.В. Кирилловой***

**Подписано в печать 17.12.2018. Гарнитура Школьная.**
**Бумага офсетная. Печать оперативная. Формат $60\times90^1/_{32}$.**
**Физ. печ. л. 5,5. Заказ № 324. Тираж 100 экз.**

Отпечатано с готового оригинал-макета
в "Типография №7" (ИП Филимонов В.В.)
г. Чебоксары, пр-т. Машиностроителей д, 11,
тел. (8352) 22-27-90, факс (9352) 22-27-68
e-mail: tipografia7@mail.ru, веб-сайт: tipografia7.com

200.00



Светлана АСАМАТ
Смирнова Светлана Васильевна Канаш районĕнчи Кайри Ăнтавăшра çуралнă, Канашри педагогика училищине, Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищине, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ. Светлана Асамат – поэт, прозаик, журналист, куçаруçă, композитор, юрăç – Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ; Чĕмпĕр облаçĕн культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ; Çеçпĕл Мишши, Эмине, И.Я. Яковлев (Чĕмпĕр), Фатых Керим (Пушкăртстан) премийĕсен лауреачĕ; 4 музыкăпа хореографи сюитин, 200 ытла юрă, 20 сăвăпа проза (чăвашла та вырăсла çырнă) кĕнекесен авторĕ.